Чăваш АССРĕн К.В. Иванов ячĕпе хисепленекен Государство премине парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссире // Коммунизм ялавĕ. – 1989. – 31 раштав.

# Чăваш АССРĕн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Государство премине парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссире

Комисси литературăпа искусствăн чаплă произведенийĕсемшĕн тата сцена çинчи ăсталăхшăн паракан премие — Чăваш АССРĕн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Государство премине 1990 çулшăн илме тăратакан ĕçсене йышăнасси çинчен пĕлтерет.

Ĕçсене министерствăсемпе ведомствăсем, творчество союзĕсем, хаçатсемпе журналсен редколлегийĕсем, кĕнеке издательстви, Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи чĕлхе, литература, истори тата экономика наука тĕпчев институчĕ, предприятисен, учрежденисен, колхозсемпе совхозсен коллективĕсем, вĕренӳ завеленийĕсемпе обществăлла организацисем 1990 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕччен тăратаççĕ. Премие илме тăратакан ĕçсене, вĕсене юлашки виçĕ çул хушшинче, анчах 1990 çулхи майăн 27-мĕшĕнчен кая мар пичетлесе кăларнă, халăха кăтартнă, выставкăсене тăратнă пулсан пăхса тухма йышăнаççĕ.